**ХАКЛАВ**

# ЭНТРЮШ ЮРАТĂВĔПЕ ЛИТЕРАТУРĂН СИПЛĔ СЫВЛĂШĔ

**Пурнăç – юрату. Этем тени тем тери асапланса пурăнать пулин те, шараçĕ унăн – çав асапран çăлăнса тухасси. Эпĕ кунта хам асăннине çирĕплетме тĕнче литературин тĕрлĕ лару-тăрăва лекнĕ çын психологине тĕслĕхсемпе тĕпчевлес теместĕп /Альбер Камю, Жерар Нерваль, Август Юхан Стриндберг тата ыттисен пултарулăхĕ/, ман тĕллевĕм ансатран та ансат: халь тухнă пĕр кĕнеке урлă чăваш прозин ку чухнехи варкăшне тимлесе пăхасси. Унтан та ытларах: Чăваш халăх писателĕн Лаврентий Таллеровăн Чăваш кĕнеке издательствинче халь пичетленсе тухнă "Майра" кĕнекинчи хайлавсемпе вулакана паллаштарасси.**

АСĂННĂ кĕнекене пĕр ятлă романпа "Хĕрринче" повеç тата, вĕçне тĕвĕлесе, кулăш калавсем кĕнĕ. Лаврентий Таллеров – хальхи чăваш прозинче тухăçлă ĕçлекен писатель. Сăмах искусствин çӳллĕшне кĕлте-хайлав хыççăн кĕлте-хайлав ывăтать вăл. Унăн пултарулăхĕ, паллах, тĕпчевлĕ ятарлă сăмаха тивĕçлĕ, эпир вара, вăй çитнĕ таран, сумлă писателĕн çĕнĕ кĕнекинчи палăрнă илем паллисене асăрхама тăрăшăпăр. Ку тĕлĕшпе уйрăмах, ман шутпа, Лаврентий Таллеровăн "Майра" романĕ курăмлă.

"Литература вăл – курăннă тĕлĕке ертсе пыни", – тенĕччĕ Аргентина писателĕ Хорхе Луис Борхес. Тĕлĕкĕ хăй халлĕн çеç мар, пурнăçĕ хăй те тĕлĕк. Этем çакă çутă тĕнчене ăнсăртран кĕмсĕрт тенĕ пек ярса пусать те çавăн пек ярса пуссах çакă çутă тĕнчерен тухса каять. Килсе кĕнипе тухса кайни хушши вара, Петĕр Хусанкай калашле – "çывăрмасăр курнă тĕлĕк пек". Çав çывăрмасăр курнă тĕлĕкĕн тӳпи вара, унăн ырлăхĕпе хурлăхĕ – юрату. Ахăртнех, пурăнан пурнăçра юрату никамшăн та телейлĕ килмест пулмалла. Малтанласа телейлĕ килнĕ пек курăнсан та, ăçта та – пĕр тĕлте çĕвĕрен каять-каятех çав юрату. Этем çут тĕнчене килсе курăннин мухтавне çут çанталăкĕ пурин валли те çав юратăва халалланă пулмалла. Лаврентий Таллеровăн "Майра" романĕнчи тĕп геройăн Андрей Егоровичăн юратăвĕ те, тĕслĕхе, çавнашкалах асамлă, пӳкле. Андрей Егоровичăн, шкул çулĕсенчи пек каласан – Энтрюшăн юратăвĕ Елена Павловна ятлă. Тен, Елена Павловна туйнă та, сиснĕ те пуль хăйне çамрăк ача – шкул ачи – килĕштернине, уншăн çуннине, анчах та вăл Энтрюшăн вĕрентекенĕ вĕт-ха, унран темиçе çул аслă хĕрарăм, çитменнине тата Энтрюшшăн Елена Павловна Керман тетĕшĕн арăмĕ. Энтрюшшăн вара Елена Павловна тĕнчи – илеме туртăнмалли кĕтрет, идеал. Энтрюш-Андрей Егорович вара Елена Павловнăна ĕмĕрĕ тăршшĕпех тӳрĕ, пуç çапса ирттерет. Чĕринче вĕçĕм хĕмленекен юратăвĕ пирки пĕрре те çăвар уçса калаймасть. Асне выртса юлнă аса илĕвĕ вара унăн – тӳп-тӳрĕ чакăл евĕр çунатсăр, хӳресĕр арман патĕнче ăсатса янă инкĕшне хăй чечек татса пани: "Ма пăхрăм-ши унталла? Каллех аса килчĕ, каллех ăша-чикке ăшаласа илчĕ. Манас тесе, урăххине аса илес тесе юри чупма тытăннăччĕ! Пĕлесчĕ те çав! Юри унта кăшт уçăлнă, çĕкленнĕ тейĕн, ман хуйха чĕртесшĕн! Шуçăмĕ тата! Урăх ниçта та курăнман шуçăм шăпах арман тĕлĕнче çеç – шăп çурçĕр енче! – тĕлкĕшсе тăрать! Кăмака çурăкĕнчен вут курăннă пек!"

Урăххи те никам та пулман ĕнтĕ Энтрюшăн, вăйăран хăйĕнчен кĕçĕнрех Аля ятлă хĕре ăсатса ярса унпа çамрăклăх туйăмĕпе тута тунине шутламасан. Энтрюш тĕлĕк курать. Энтрюш тĕлĕкĕнче Аля йĕрет. "Лена!.. Елена!.." – тесе асаплăн вăранса каять каччă, кӳршĕ яла, Чанкассине, каçса самантлăх йӳле кăмăл еккине лекнĕскер, Елена Павловна çывăхра çуккипе иленнĕ тӳрĕ мар туйăмĕсемпе сыв пуллашса: "Аля, Алина. Каçар мана. Сана юратни çителĕклĕ пулманнипе Елена Павловнăна аса илтĕм. Ан тив, тĕлĕкре çеç пултăр ку. Каçар мана, Аля. Елена Павловнăна манас тесе шырарăм, тупрăм та юратрăм иккен, эпĕ сана. Эсĕ ун пекех сарă, хитре пулнăран. Ольăна та çавăнпах юратнă. Анхвис та сарă. Ун тĕллĕн юрату йăшăлтатам пекки те туман, çапах вăл та вăратнă айван туртăма та пулин. Каçар мана, Аля, хама та, сана та улталасшăн пулнишĕн. Елена Павловнăна Турă пек курнăран хĕр турăсем пирки пакăлтатнă эпĕ. Калаçни юрĕ-çке, тем мар теме те пулать. Тем мар çав. Вăрттăн çыхăну пулнă кунта. Хам та туйман-сисмен çыхăну.

Тек каçмарăм Аля патне. Ултавçă терĕ ĕнтĕ вăл мана. Куншăн та хытă асаплантăм эпĕ. Çапах та пĕтĕм ĕмĕре ултавпа çыхăнтарнинчен лайăхрах, тĕрĕсрех пек туйăнчĕ каçманни, капла çеç улталани".

Туйăм çаврăмĕ, пурнăç техĕмĕ Энтрюша çитĕнсе ар çулне кĕрсе пынăçемĕн те пурпĕрех илемĕн пĕртен-пĕр çынни патне кăна туртать. Вăл – Елена Павловна сăнарĕ: – Лена!.. Елена! – чĕре те тухса каймарĕ-ши сасăпа пĕрле...

Тĕрĕс, малашне эпĕ сана Лена тесе чĕнĕп. Елена тесе. Ăшра та çапла чĕнĕп. Çирĕклĕкасра юлашки хут тĕл пулнă чухне эсĕ çирĕм улттăраччĕ. Унтанпа курман çулсем – шутра мар! Эппин, çав-çавах çамрăк, ман тантăшăм теме те юрать. Чылай аслăрах пулсан та тем мар. Пит-куçна малтанхи пĕркеленчĕксем улăштарчĕç те-и – ку та тем мар: хĕвел пек сăн-илемне нимĕн те, нимле йĕр те пăсас çук. Хĕвел нихăçан та ватăлмасть. Вăл ĕлĕкавал та илемлĕ пулнă, халĕ те, çав-çавах ытарайми çутă та, хĕрӳллĕ те, илемлĕ те".

Авторĕ романра /пурнăçра та ĕнтĕ/ сăнанă пек "Илем çумне илем çеç килĕшӳллĕн çыпçăнать" тенешкел, Энтрюшран Андрей Егорович ят-сулăмпа кун-çул юхăмне тухнăскер, хайлаври тĕп калуçи /Андрей Егорович/ хăй пурнăçĕ вĕçленмĕшĕнче, ватăлмалăх кунĕсенче, тăван тăрăхне килсе тĕпленет. Арçын пурнăçĕ пекех юхăнчăка тухса пыракан Елена Павловна вил тăприне тирпей-илем кĕртесшĕн вăл. Çавăнпах ĕнтĕ вăл хăй пурăннă çурта тупăшлă улăштарса укçатенкĕллĕ те пулса тăнă. Андрей Егорович, шкул çулĕсенче сцена искусстви енне туртăнса, Елена Павловна пулăшнипе пьесăласа хатĕрленĕ постановка-спектакльсене те хутшăннăскер, пурнăçĕн кĕр енне сулăннă кунĕсенче вăл, Елена Павловна ятне, çыравçă ĕçĕ-хĕлĕпе тăрмашса пăхасшăн. Хайлавне вара, куçĕ шывлансах тăнипе ручкăпа çырса пыма хĕнрен, тӳрех сăмах вĕççĕн каласа магнитофон кассети çине çырма тĕв тунă. Хайлавне, сăнарĕ калашле: "Эпĕ ăнăçлах мар, тĕлĕнтермелли пур пулсан та, темле йăлăхтарнă сăмах çыхăнăвĕ", тет пулин те, ăна вара çапла ят парать: "Хĕрлĕ кăлкан" повеçаса илӳ. Хайлавне автор хăй валли çырать,




пичетлеме мар, аса илсе пурăнма.

Инкекĕ вара, чăнах та, пурнăçра туллиех. Акă, иртнĕ вăрçă çулĕсенче хыпарсăр çухалнă Керман тетĕшĕ, амăшĕн Айлăмкасри аппăшĕн учительте ĕçлекен шăллĕ, вăрçă умĕн хăй пекех учительте ĕçленĕскер, вырăс хĕрне, майрана, качча илнĕ. Акă вĕсене, тăванĕсене курма килнĕскерсене, пĕчĕк Энтрюш çăвар купăсĕ каласа ташлаттарать. Чăваш сăмахĕсене те вырăсла май аран-аран пусарса калаçакан инкĕшĕ Елена Павловна ăна ташăшăн тав туса çепĕç тутипе Энтрюш тутине перĕнет. "Давтапуç, маддурым. Бызык бул", – тет вăл. Андрей Егоровичĕ ĕнтĕ ăна, чĕрине уçса, пĕрре те чунĕнче пытарса пурăннă сăмахĕсене каласа кураймарĕ, вăрттăн юратăвĕпе çеç хавхаланса пурăнчĕ. Акă, каламалли сăмахах каламасăр усранă пӳкле самант вĕçĕ, Елена Павловнăн, ырă çыннăн, упăшки вăрçăра çухалнă хыççăн телей сĕмне шыраса телейсĕре тăрса юлнă хăраххăнăн тăрлавсăр вилĕмĕ. Çырмана тăрăннă машина ӳпленсе кайнипе Елена Павловна сарăмсăр пĕтет. Ĕçне-хĕлне кура çав тăрăха пырса тухма тивнĕ Энтрюш Елена Павловнăн сивĕннĕ тутисене пĕрремĕш хут, пӳкле чуп тăвать, кая юлнă ӳкĕнӳ сăмахĕсемпе хăйне питлет:

– Эпĕ! Эпĕ айăплă куншăн, – калаçакалаçа хӳхлерĕм, уларăм эпĕ. – Капла пулмастчĕ иксĕмĕр пĕрлешнĕ пулсан! Пулмастчĕ эпĕ пăрăнса çӳремен пулсан! Эпĕ çын сăмахĕнчен хăраман пулсан! Эпĕ киревсĕр йĕркене пăхăнман пулсан! Пулмастчĕ! Пулмастчĕ! Эпĕ айăплă! Эпĕ!..

Ĕмĕрĕ тăршшĕпех хĕвеллĕ туйăма тĕрĕстĕкел упраса пурăннă этем – телейлĕ. Андрей Егоровичăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне пурнăçлама, Елена Павловна вил тăприйĕ тавра тимĕр карта тытса тирпей-илем кӳме нумай терт-шар витĕр тухма тивет. Йӳпленсечăлханса пырать вара сюжет йĕрĕ Елена Павловнăн вил тăприне тирпей-илем кӳме хывнă укçи-тенки йĕрĕ-одисеи тавра, магнитофонпа çырнин тата çырни тăрăххăн калăпланă ал çырăвĕ халлĕн чăмăртаннă кукăрмакăр çĕнтерĕвĕ. Роман Андрей Егоровичăн вилĕмĕпе пĕтет. Вулаканăн çаплах тесе шутлама пулать. Пульницана чĕри аптăратнипе килсе лекнĕскере, Елена Павловна ӳтне морга наçилккапа çĕклесе утнă пекех, Андрей Егоровича та наçилккапа çĕклесе утнипе вĕçленет.

"Майра" роман, ман шутпа, пӳрнĕ çĕртенех арканнă пӳкле шăпасен ятне хывнă мухтавлă-хурлă ĕсĕклев. Елена Павловна пур тĕлĕшпе те – тулаш илемĕпе те, шалти чунчĕри илемĕпе те – телей курма çуралнă этемччĕ. Ун килпетлĕ шăпине вăрçă пуçланă выçă этемсем тĕп турĕç – Керман, упăшки, вăрçăра хыпарсăр çухалчĕ. Вăл çухални Елена Павловна кун-çулне те пăтратса ячĕ. Пурччĕ Елена Павловна тĕлне тепĕре техĕмлĕн йăл илнĕ телей шанчăкĕ – Энтрюш, анчах хăнăхнă йăларан иртсе кăмăлне çиеле кăларайманни, ав, иккĕшин шăпине те тĕлсĕр-палсăр вĕçлерĕ.

Кĕнекене кĕнĕ "Хĕрринче" повеç те, ман шутпа, ытларах "Майра" роман сĕмĕпе калăпланнă япала. Пĕр вăхăтра, пĕр сулăмпа çырнă хайлавсем. Кĕтерукĕ сарăмсăр пĕтнĕ хыççăн Вичча та хăй çине хăй алă хурать – кĕтӳçĕ Кĕтерукпа ун сулхăнĕнче чунĕсене уçса нумай ларнă ватă хыртан çакăнса вилет. Вичча хăй виличчен шурă хут çине çапла çырса хăварать: "Кĕтеруксăр пурнăç çук. Каçарăр, сывă пулăр!" Пӳкле вилĕмсене пула юратнă чĕресен çакă çутă тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлма тивет. К.Ивановăн "Нарспи" поэминчи Нарспи сĕмĕ мар-и ку? Паллах, Нарспи сĕмĕ. Кĕнекери илсе кăтартнă хайлавсенчи хĕр-сăнарсен Нарспи пек ирĕксĕр качча парса ирĕке çăлăнса тухас тени çук. Анчах пурăнăç çаври çав-çавах тертлĕ, пăтăрмахлă-çке пирĕн. Ирĕке çăлăнса тухас тени те вĕсен кашнин тĕлне хăйне евĕрлĕ.

Лаврентий Таллеровăн çак икĕ хайлавне те паянхи чăваш прозишĕн тĕслĕхлĕ япаласем теме пулать. Хв. Уяр хăш-пĕр çыравçă пирки çапла калани аса килсе кайрĕ: "Эпĕ, – тетчĕ вăл пĕр-пĕр ăстах мар çыравçă пирки, – çав писатель мĕнле çырасса малтанах пĕлсе тăратăп та, унран ырă япала кĕтмелли çук ĕнтĕ". Мĕнле калас, Хв. Уяр йӳтĕмĕпе, эпир те Лаврентий Таллеров мĕнле çырасса малтанах пĕлсе тăратпăр: аслă литература хăватне туйса, чăваш анине малалла лайăххăн кăпкалатса, чăваш чĕлхипе чăвашла çырать вăл.

**Хветĕр АГИВЕР.**